# АННОТАЦИЯ

Ку ȩ̄ç программине Чăваш Республикин Куславкка районĕнчи пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан муниципаллă бюджетлă "Кунерти пĕтĕмĕшле пĕлу паракан вăтам шкулăн" вĕренӳ планē тата «Тăван чĕлхепе литература вулавĕн тĕслĕх программисем: чăваш шкулĕн 1-4 класĕсем валли. М.К. Волков, Л.П. Сергеев, Т.В. Артемьева, О.И. Печников, А.Р. Кульева.- Шупашкар: Чăваш Республикин вĕрентӳ институчĕн издательство центрĕ, 2013.-тĕпе хурса хатĕрленĕ.

Тăван чĕлхе вĕрентнĕ чух пуçламăш шкулта çакăн пек пысăк та пархатарлă **<u>тĕллевсене</u>** пурнăçламалла:

— вĕренекенсен çынлăх туйамĕсене вăйлатмалла, пурнăçа юратма, ырра шанса тăма тата хайсене те ырă кăмăллă, сăпайлă пулма хăнăхтармалла;

— ачасем таврари пурнăç, этемпе çутç çанталăк çинчен мĕн пĕлнине анлăлатмалла;

— ачасен çыхăнуллă тата сăнарлă шухăшлавĕпе ăсне, асăмлас хевтине аталантармалла;

— вĕрену ĕç-хĕлне лайăхрах хăнăхтарса, унан ăслайĕсене «алла илме» май памалла; вĕренӳ вăхăчĕпе перекетлĕ усă курма, харпар хай тĕллĕн ĕçлессин ансатрах мелĕсене чухлама вĕрентмелле;

— тăрăшуллă та тимлĕ вĕренме, кĕнекепе кăсăкланма хăнахтармалла.

**Программăна пурнăçлама çак вĕренӳ хатĕрĕсемпе усă курнă:**

Артемьева Т. В., Волков М.К.,. Сергеев Л.П. Вĕренӳ пособийĕ. Чăваш букварĕ: 1-мĕш класс валли – Шупашкар: Чăваш кĕнеке издательстви, 2015 çул;

Вĕренӳ пособийĕ. Чăваш чĕлхи. 2 класс валли. Л. П. Сергеев, Т. В. Артемьева, А. Р. Кульева, Шупашкар: Чăваш кĕнеке издательстви: 2016 çул;

Вĕренӳ пособийĕ. Чăваш чĕлхи. 3 класс валли. Л. П. Сергеев, Т. В. Артемьева, А. Р. Кульева, Шупашкар: Чăваш кĕнеке издательстви: 2013 çул;

Вĕренӳ пособийĕ. Чăваш чĕлхи. Виноградов Ю. М., Кульева А. Р. 4 –мĕш класс валли. Шупашкар. Чăваш кĕнеке издательстви, 2014 çул;